## Анлă форум

# Тăшман кунта çитеймен

Кăçал фашистсене Мускав патĕнчен хӳтерсе янăранпа 66 çул çитрĕ. Çĕршыв чĕрине сыхласа хăварасси питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă. Фашист Мускава тепĕр енчен – Сталинград, Саратов, Ульяновск, Горький хулисене илсе – пырса кĕме ан пултартăр тесе, Сăр – Хусан хӳтĕлев хатĕрĕсем тума палăртнă. Çак паллă пулăма халалласа Чăваш наци музейĕнче пысăк форум иртрĕ. Унта шкул ачисем, студентсем, тĕрлĕ çĕрте ĕçлекенсем тата ĕçпе вăрçă ветеранĕсем хутшăнчĕç.



Малтан сăмах çамрăксене пачĕç. Студентсен ячĕпе Таня Сильвестрова тухса калаçрĕ. Содержани енĕпе питĕ пуян пулчĕ Таньăн доклачĕ. 1941 çулхи юпа уйăхĕнчен пуçласа нарăс уйăхĕччен тăсăлнă хӳтĕлев объекчĕсем тăвас ĕçе 12-мĕш арми ертсе пынă. Мари, Чăваш, Тутар Республикисем урлă иртнĕ çак хӳтĕлев. Пирĕн республикăри хăш ялсем тĕлĕпе иртнине тĕплĕн паллаштарчĕ Таня. 8 пин ытла кубла метр çĕр кăларса турттарма тивнĕ, 3 пине яхăн çĕр пӳртсем, 2 пин ытла блиндажсем хатĕрленĕ. Шартлама сивĕсене пăхмасăр пĕтĕм ĕçе вăхăтра пурнăçланă ентешсем. Ĕç условийĕсем, ĕçченсене епле хавхалантарни, чыслани пурте кăсăклă пулчĕ итлекеншĕн.

Н.Л. Яковлев та тухса калаçрĕ уявра. Етĕрне районĕнчи Саръял патĕнче ĕçлени çинчен ӳкернĕ ӳкерчĕке пурте хапăл турĕç. Николай Лукич Сăр тăрăхĕнчи ĕçсем çинчен çеç мар, вăл вăхăтра çулсем тăвасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни çинче чарăнса тăчĕ. Фронта кирлĕ хатĕр турттарма, вăрçă пыракан çĕрсенчен завод-фабрикăсене эвакуацилеме питĕ кирлĕ пулнă вĕсем. Тăвай-Саланчăк, Çĕрпӳ çулĕсем, Шупашкар чукун çулне тунă çĕре хутшăннисем, Ржев хулинче çĕр айĕн çӳремелли çулсем тунă çĕрте ĕçленĕ ентешсем те пулчĕç форумра.

Сывлăха сыхлас тата социаллă аталану министрĕн çумĕ Г.В. Степанов ветерансене паракан çăмăллăхсем валли уйăрнă укçа шайĕ ӳсни, пенси фончĕ урлă пĕр хутчен паракан социаллă пулăшу пирки ăнлантарчĕ.

Ĕç кунпах вĕçленмен-ха. 2008 çулхи çу-çĕртме уйăхĕсенче Сăр – Хусан хӳтĕлев объекчĕсем иртнĕ вырăнсем тăрăх 380 километра тăсăлакан чупу йĕркелессине палăртнă.

Шупашкар хулинчи 1-мĕш номерлĕ гимнази музей тума материалсем парать. Çав вăхăта сăнланă сăн ӳкерчĕксем, ĕç хатĕрĕсем тата ытти те пуçтараççĕ.

Тунă ĕçсем çамрăксене патриотла воспитани панă çĕрте питĕ вырăнлă.

**Н. ЯКОВЛЕВА, Панклири историпе краеведени музейĕн заведующийĕ.**

**Ӳкерчĕкре: кунтан тăшман иртеймĕ.**

**Н. ЯКОВЛЕВ ӳкерчĕкĕ.**

## Тĕслĕх библиотекăра

# Ачасем кĕнекепе туслă

Часах республикăра кĕнеке вулама юратакансен “Кĕнекепе – çĕнĕ çула” фестивалĕ пуçланать. Пирĕн районта та çак фестивале çитес эрнере ирттерме палăртнă. Библиотека ĕçченĕсем фестивале хутшăнса тĕрлĕ мероприятисем ирттерĕç, ачасене çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарĕç, выставкăсем йĕркелĕç. Çак эрнере вара çулталăкĕпе библиотекăпа туслă пулнă ачасене, нумай кĕнеке вуланă ачасене палăртĕç.

Москакасси ял библиотеки те çак фестивале хутшăнма кăмăл турĕ. Ноябрь уйăхĕнче тĕрлĕрен мероприятипе пуян пулчĕ унăн пурнăçĕ. Тĕрлĕрен уявсем, конкурссем, КВНсем, куравсем иртрĕç библиотекăра. “Чăваш писателĕсем – ачасем валли” кĕнеке куравĕ те библиотекăна килекен кашни ачанах хăйĕн патне йыхравларĕ. Кунта вырнаçнă кашни кĕнеке хăй патне асамлăн туртать пулсан епле-ха вуламасăр чăтăн-ха. Пеппи-Вăрăм чăлха та пулса курчĕ ку библиотекăра, яланах кĕнекепе туслă пулма хушса хăварчĕ.

Москакассинчи вăтам шкул ачисем пирĕн патриарх И.Я. Яковлев чăваш халăхне пилленĕ “7 халалне” аннесен кунне уявлама пуçтарăннă хăнасем умĕнче кăтартса пачĕç. “Тетте” журнал уявне ирттерни те ачасене хамăр республикăра тухса тăракан хаçат-журналпа туслă пулма, вулама-паллашма пулăшĕ.

Тĕслĕх библиотека ĕçлеме пуçлани ачасене кĕнекепе паллашма кăна мар, тĕрлĕрен электронлă каталогсемпе, ятарлă программăсемпе, дисксемпе ĕçлеме май парать. Çакна кура пирĕн библиотекăра та çĕнĕлĕхсемпе нумай усă курма тăрăшатпăр. Çак кунсенче ятарласа çут çанталăка юратакан ачасемпе “Чи ăсли” телевикторина ирттертĕмĕр. Çак конкурса арçын ачасем хутшăнма кăмăл турĕç. Çĕнтерӳçи вара Миша Гаврилов пулчĕ. Мишăна Хисеп грамоти парса чысларăмăр. Миша чи малтан ачасем валли тухса тăракан “Филя” журналпа паллашать те, тен, çакă пулăшрĕ пулĕ те ăмăртура.



Хамăр ĕçе пĕтĕмлетнĕ май çулталăк хушши кĕнекепе туслă пулнă ачасене ятран палăртса хăварас килет. Акă вĕсем, кĕнекен чăн-чăн тусĕсем: Надя Архипова, Наташа Ильина, Росана Яковлева, Диана Архипова, Толя Анекшев, Женя Андреев, Ксения Григорьева, Ирина Сибякова. Вĕсем пурте çулталăк хушшинче 100 кĕнекерен те ытла вуласа тухнă. Килес çул та кĕнекепе туслă пулар, ялти библиотека сукмакне такăрлатсах тăрар.

**И. СИБЯКОВА, Москакасси ял библиотекин ертӳçи.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурс çĕнтерӳçисем.**

## Вырăнти суйлав итогĕсем

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Муркаш ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне 5 № Çурçĕр суйлав округĕпе суйланин итогĕсем çинчен**

| | |
|---|---|
| Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ | 187 |
| Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 155 |
| Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 5 |
| Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 7 |
| Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 153 |

Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ:

| | |
|---|---|
| Исакова Елена Николаевна | 63 |
| Колбасова Надежда Гурьевна | 90 |

ЧР “Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен” саккунăн 48 ст. 2 п. Колбасова Н.Г. ытларах сасă пухса 5 № Çурçĕр округĕпе депутатсен Муркаш ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев. Секретарĕ В.К. Сорокина.**

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Турай ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне 10 № Тушкасси суйлав округĕпе суйланин итогĕсем çинчен**

| | |
|---|---|
| Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ | 120 |
| Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 93 |
| Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 10 |
| Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 4 |
| Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 99 |

Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ:

| | |
|---|---|
| Иванов Владимир Ильич | 88 |
| Ильменейкина Клавдия Ивановна | 11 |

ЧР “Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен” саккунăн 48 ст. 2 п. Иванов В.И. ытларах сасă пухса 10 № Тушкасси округĕпе депутатсен Турай ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев. Секретарĕ В.К. Сорокина.**

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Юнкă ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне 10 № Канаш суйлав округĕпе суйланин итогĕсем çинчен**

| | |
|---|---|
| Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ | 158 |
| Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 64 |
| Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 50 |
| Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 7 |
| Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 107 |

Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ:

| | |
|---|---|
| Михайлов Владимир Витальевич | 68 |
| Назарова Надежда Владимировна | 39 |

ЧР “Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен” саккунăн 48 ст. 2 п. Михайлов В.В. ытларах сасă пухса 10 № Канаш округĕпе депутатсен Юнкă ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев. Секретарĕ В.К. Сорокина.**

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Ярапайкасси ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне 4 № Иштерек суйлав округĕпе суйланин итогĕсем çинчен**

| | |
|---|---|
| Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ | 168 |
| Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 86 |
| Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 11 |
| Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 4 |
| Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 93 |

Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ:

| | |
|---|---|
| Андреев Владимир Александрович | 35 |
| Голубев Вячеслав Вениаминович | 58 |

ЧР “Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен” саккунăн 48 ст. 2 п. Голубев В.В. ытларах сасă пухса 4 № Иштерек округĕпе депутатсен Ярапайкасси ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев. Секретарĕ В.К. Сорокина.**

**2007 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче депутатсен Ярапайкасси ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне 8 № Кӳстерек суйлав округĕпе суйланин итогĕсем çинчен**

| | |
|---|---|
| Списока кĕртнĕ суйлавçăсен хисепĕ | 164 |
| Суйлав кунĕнче суйлав пӳлĕмĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 86 |
| Суйлав пӳлĕмĕн тулашĕнче панă бюллетеньсен хисепĕ | 38 |
| Тĕрĕс мар тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 1 |
| Тĕрĕс сасăланă тесе йышăннă бюллетеньсен хисепĕ | 123 |

Регистрациленĕ кандидатсемшĕн панă сасăсен хисепĕ:

| | |
|---|---|
| Васильев Андрей Владимирович | 2 |
| Жуков Геннадий Валерианович | 87 |
| Тюрин Владимир Константинович | 34 |

ЧР “Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен” саккунăн 48 ст. 2 п. Жуков Г.В. ытларах сасă пухса 8 № Кӳстерек округĕпе депутатсен Ярапайкасси ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутатне суйланнă тесе йышăнас.

**ТСК ертӳçи А.В. Андреев. Секретарĕ В.К. Сорокина.**

## Официально

**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА**
**Моргаушское районное Собрание депутатов**

**РЕШЕНИЕ**
**30.11.2007г. № С-22/5**
**село Моргауши**

**Об утверждении платы за содержание и ремонт жилого помещения на 2008 год**

В соответствии с требованиями раздела VII Жилищного Кодекса Российской Федерации, Федеральным законом № 131-ФЗ от 06.10.2003 г. “Об общих принципах организации местного самоуправления в РФ” и протоколом заседания комиссии для проведения экспертизы изменения платы за ремонт и содержание жилого помещения ( в т.ч вывоз и утилизация твердых бытовых отходов) для населения Моргаушского района от 09 ноября 2007 года

Моргаушское районное Собрание депутатов **р е ш и л о:**

1. Утвердить и ввести с 1 января 2008 года:

1.1 Плату за содержание и ремонт жилого помещения, включающую в себя плату за услуги и работы по управлению многоквартирным домом, содержанию и текущему ремонту общего имущества в многоквартирном доме для нанимателей, занимающих жилые помещения по договорам социального найма и договорам найма жилого помещения муниципального жилищного фонда (Приложение 1)

1.2 Тарифы для предприятий и организаций, оказывающих услуги по вывозу и утилизации твердых бытовых отходов населению, проживающих в муниципальном жилищном фонде Моргаушского района (Приложение 2).

3. Принять к сведению, что для нанимателей жилых помещений возмещение расходов на проведение капитального ремонта предусмотрено в бюджете в размере 2 руб.17 коп. на 1 кв. м жилья.

4. Рекомендовать собственникам жилых помещений ввести:

4.1 Плату за содержание и ремонт жилого помещения на уровне размера платы для нанимателей, занимающих жилые помещения по договорам социального найма и договорам найма жилого помещения муниципального жилищного фонда Моргаушского района .

4.2 Плату за капитальный ремонт жилого помещения в размере 2 руб. 17 коп. на 1 кв.м общей площади жилья (без дополнительного предъявления НДС).

5. Признать утратившим силу решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 01.12.2006г. №С-15/4 “Об утверждении платы за содержание и ремонт жилого помещения на 2007 год”.

6. Контроль за выполнением настоящего решения возложить на отдел экономики администрации Моргаушского района.

7. Настоящее решение вступает в силу после официального опубликования в районной газете “Знамя победы”.

**Глава Моргаушского района**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

Приложение 1
к решению Моргаушского районного
Собрания депутатов
от 30 ноября 2007г. № С-22/5

**ПЛАТА**
**за содержание и ремонт жилого помещения, включающую в себя плату за услуги и работы по управлению многоквартирным домом, содержанию и текущему ремонту общего имущества в многоквартирном доме для нанимателей, занимающих жилые помещения по договорам социального найма и договорам найма жилого помещения муниципального жилищного фонда Моргаушского района**
**(за 1 кв.м. общей площади в месяц, в рублях)**

| № п/п | Типы жилищного фонда | Плата |
|---|---|---|
| 1 | Жилые дома со всеми удобствами | 6,46 |
| 2 | Жилые дома с частичными удобствами | 6,14 |
| 3 | Неблагоустроенные жилые дома | 5,39 |

Приложение 2
к решению Моргаушского районного
Собрания депутатов
от 30 ноября 2007г. № С-22/5

**ТАРИФЫ**
**для предприятий и организаций, оказывающих услуги по вывозу и утилизации твердых бытовых отходов населению, проживающих в муниципальном жилищном фонде Моргаушского района**

руб. за 1 куб. м

| №№п. п | | Население |
|---|---|---|
| 1. | Тариф за вывоз твердых бытовых отходов с объектов жилищного фонда | 86,17 |
| 2. | Тариф за утилизацию твердых бытовых отходов с объектов жилищного фонда | 44,92 |

**Примечание: плата и тарифы установлены без дополнительного предъявления НДС.**